28-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945
ОКТЯБРЬ
13
ШАМАТКУН
199 (6950) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) Обкомӗпе
Шупашкар хула комитечӗ,
ЧАССР Верховный Совечӗ
тата Шупашкар хула
Совечӗн хаҫачӗ

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

„СССР Верховный Советне суйламалли Положение“ ҫирӗплетесси ҫинчен

СОВЕТЛӐ СОЦИАЛИЗМЛӐ РЕСПУБЛИКӐСЕН СОЮЗӖН ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ПРЕЗИДИУМӖ ҪАПЛА ЙЫШӐНАТЬ:

«СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТНЕ СУЙЛАМАЛЛИ ПОЛОЖЕНИЕ» ҪИРӖПЛЕТЕС.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 ҫулхи октябрӗн 11-мӗшӗ.

СССР Верховный Советне суйламалли Положени

Паян «СССР Верховный Советне суйламалли Положени» пичетленсе тухать. Ӑна СССР Верховный Совет Президиумӗ 1945 ҫулхи октябрӗн 11-мӗшӗнче ҫирӗплетнӗ. Ҫакӑ вӑл—Сталинла Конституцин, тӗнчери чи демократиллӗ Конституцин ҫирӗп принципӗсем ҫинче никӗсленсе тӑракан документ пулать. «Положенири» статьясем пирӗн социализмлӑ аслӑ демократин сӑн-сӑпатне ҫав тери уҫӑмлӑн кӑтартса параҫҫӗ.

Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн Верховный Советне — ССР Союзӗн государство влаҫӗн чи аслӑ органне — пирӗн ҫӗршыври граждансем пурне те тивӗҫ, пӗртан, тӳрех тата вӑрттӑн сасӑласа суйлаҫҫӗ. Ытти нихӑш ҫӗршывра та, вӗсенче нумайӗшӗнче формальнӑй йӗркепе демократи принципӗсем ҫинчен калаҫҫӗ пулин те, ҫавӑн пек пӗртан та чӑннипех пурне те тивӗҫ суйлавсем пулса иртмеҫҫӗ. Капитализмла ҫӗршывсенче кирек мӗнле те пулин сӑлтавпа чухӑнрах ҫынсене, пӗр-пӗр вӑйсӑртарах наци ҫыннисене суйлава хутшӑнассинчен сирсе хӑвараҫҫӗ. Час-часах ҫарти салтаксемпе офицерсене, татах та ытларах—халӑхӑн ҫур пайӗ пулса тӑракан хӗрарӑмсене суйлавсене пачах та хутшӑнтармаҫҫӗ.

Совет государствинче пур граждансем те, вӗсем мӗнле расса е наци ҫыннисем пулнине, арҫын е хӗрарӑм пулнине, мӗнле тӗне тытнине, мӗн чухлӗ вӗреннине, пӗр вырӑнта пурӑннипе пурӑнманнине, социальнӑй мӗнле сийрен тухнине, пурлӑх тӗлӗшӗнчен мӗнле пулнине тата ӗлӗк мӗн туса пурӑннине пӑхмасӑр, пурте суйлава хутшӑнма та, суйланма та пултараҫҫӗ.

СССР гражданинӗ СССР Верховный Совечӗн депутатне суйламалли кандидатшӑн тӳрех хӑй сасӑлать. Вӑл хӑшпӗр ҫӗршывсенчи пек темӗнле «суйлавҫӑшӑн» сасӑламасть. Совет ҫӗршывӗнчи кашни гражданин суйлав вӑхӑтӗнче хӑйӗн сассине кама панине питӗ ҫирӗп вӑрттӑнлӑхра сыхласа усраҫҫӗ.

Совет Союзӗнчи суйлав правин ҫак ҫирӗп никӗсӗсене «Положенин» I-мӗш сыпӑкӗнче, унӑн 11 статьинче каласа панӑ. «Положенин» ытти сыпӑкӗсемпе статьисенче вара суйлавсене хатӗрлемелли тата ирттермелли йӗркене ҫирӗп палӑртса хунӑ. Ҫав йӗркесем ӗнтӗ пурне те тивӗҫ, пӗртан, тӳрех тата вӑрттӑн сасӑласа суйлассине чӑннипех пурнӑҫа кӗртсе пыма май параҫҫӗ. Суйлавҫӑсен списокӗсене тунӑ тата суйлав округӗсемпе суйлав участокӗсене тунӑ хыҫҫӑн сасӑлачченхи тата суйлав результачӗсене пӗлтеречченхи вӑхӑт хушшинче СССР гражданинӗн демократиллӗ прависене закон хӳтӗлесе пырать.

«СССР Верховный Советне суйламалли Положение» СССР Верховный Советне суйламалли срока пӗлтернӗ хыҫҫӑн темиҫе кунтанах пичетлесе кӑлараҫҫӗ. СССР Верховный Советне 1946 ҫулхи февралӗн 10-мӗшӗнче суйлама палӑртнӑ. Историри мӗнпур вӑхӑтсемпе халӑхсен чи аслӑ вӑрҫинчен ҫӗнтерӳ туса тухнӑ Совет ҫӗршывӗ, халӗ хӑйӗн пурнӑҫне мирлӗ тапхӑр ҫине куҫараканскер, суйлавсене хатӗрленес тапхӑра пырса кӗрет. Пирӗн умра политикӑллӑ тата организациллӗ пысӑк ӗҫ тумалли тӑвата уйӑх. Ҫак ӗҫе халӑхӑн сарлака массисем хутшӑнӗҫ.

Халӗ пирӗн задача пур суйлавҫӑсене те «СССР Верховный Советне суйламалли Положенипе» паллаштарасси пулса тӑрать. «Положение» кашни рабочипе работницӑн, колхозникпа колхозницӑн ӑнланса илмелле, ӑна Совет ҫӗршывӗнчи кашни ҫыннӑн пӗлсе тӑмалла.

Иртнӗ суйлав хыҫҫӑнхи вӑхӑт хушшинче миллионшар совет гражданӗсем вӑрҫӑ тӗрӗслевӗсем витӗр паттӑрла тухса, аслӑ ҫӗнтерӳ туса, политика тӗлӗшӗнчен чылай ҫитӗнчӗҫ, обществӑллӑ пурнӑҫа активлӑн хутшӑнма тытӑнчӗҫ. Вӗсем хамӑрӑн тӑван ҫӗршывшӑн тивӗҫлипех мухтанса СССР Верховный Совечӗн суйлавӗсене хатӗрленӗҫ, «СССР Верховный Советне суйламалли Положение» тӗплӗн вӗренӗҫ. Ҫав вӑхӑт хушшинче миллионшар ҫамрӑк граждансем 18 ҫула ҫитрӗҫ, халӗ ӗнтӗ вӗсем СССР Верховный Советне пуҫласа суйлаҫҫӗ.

«Положенин» пур сыпӑкӗсемпе статьисем те ССР Союзӗнчи пур граждансемшӗн те питӗ пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. Суйлавҫӑсен списокӗсене тӑвассине ӗҫҫынни депутачӗсен исполкомӗсен задачи пулса тӑрать. Анчах та суйлавҫӑсен списокне кӗртмелли йӗркене, ҫав списоксемпе паллашассине урӑх вырӑна куҫса каякан ҫынсен «Сасӑлама право паракан удостоверени» илессине, суйлавҫӑсен списокӗнчи тӗрӗс марлӑхсем ҫинчен заявленисем памалли правилӑсене пирӗн ҫӗршыври ҫитӗнсе ҫитнӗ кашни гражданинӑн тӗплӗн пӗлсе тӑмалла.

«СССР Верховный Советне суйламалли Положенин» «Союз Советне тата Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен суйлав округӗсем» ҫинчен калакан III-мӗш сыпӑкӗ питӗ пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. СССР Конституцийӗн 33-мӗш статьинче ҫапла каланӑ: «СССР Верховный Совечӗ икӗ палатӑран тӑрать: Союз Совечӗ тата Национальноҫсен Совечӗ». Конституцин ытти статьисем те, ҫавӑн пекех тата «Положенин» III-мӗш сыпӑкри тивӗҫлӗ статьисем пирӗн икӗ палатӑллӑ системӑн политикӑллӑ мӗнпур пӗлтерӗшне татӑклӑн кӑтартса параҫҫӗ. Союз Совечӗн пӗр депутатне 300.000 ҫын пӗрлештерсе тӑракан округран суйлаҫҫӗ. Национальноҫсен Советне вара урӑхла суйлаҫҫӗ: кашни союзлӑ республика, унта мӗн чухлӗ халӑх пурӑннипе пӑхмасӑрах, Национальноҫсен Советне тивӗҫлӗ 25 округран 25 депутат суйласа ярать; автономиллӗ кашни республика—11 депутат, автономиллӗ область—5 депутат, наци округӗ 1 депутат суйласа ярать. Ҫапла ӗнтӗ пирӗн суйлав системинче Совет Союзӗнче пурӑнакан мӗнпур нацисен чӑн-чӑн пӗртанлӑхӗ палӑрса тӑрать.

«Положенин» суйлав участокӗсем, суйлав комиссийӗсем тата СССР Верховный Советне депутата суйлама кандидат тӑратмалли йӗрке ҫинчен калакан сыпӑкӗсем пирӗн ҫӗршывра гражданинӑн демократиллӗ прависене мӗнле пурнӑҫа кӗртнине кӑтартса параҫҫӗ. 57-мӗш статьяра кандидатсене мӗнле тӑратмалли йӗркене каласа панӑ:

«СССР Конституцийӗн 141-мӗш статьи тӑрӑх, СССР Верховный Советне депутата суйлама кандидат тӑратма обществӑллӑ организацисемпе ӗҫҫыннисен обществисен право пур: коммунистсен партин организацийӗсем, профсоюзсем, коопераци организацийӗсем, ҫамрӑксен организацийӗсем тата культура обществисем кандидат тӑратма пултараҫҫӗ».

Депутата суйламалли кандидатсене обществӑллӑ организацисемпе ӗҫҫыннисен обществисен центрти органӗсем те, ҫавӑн пекех тата республикӑри, крайри, облаҫри, уездри тата районри органӗсем те, предприятисенчи рабочисемпе служащисен, ҫар чаҫӗсенчи ҫар ҫыннисен пухӑвӗсем, колхозсенчи тата ялсемпе волаҫсенчи хресченсен пухӑвӗсем тӑратма пултараҫҫӗ. СССР Верховный Советне депутата суйлама тӑратнӑ кандидат пӗр суйлав округӗнче ҫеҫ суйланма пултарать.

Пирӗн суйлавсем—чӑннипех халӑх суйлавӗсем пулса тӑраҫҫӗ. «СССР Верховный Советне суйламалли Положени» халӑха хӑйӗн ирӗкне каласа пама, государство влаҫӗн аслӑ органне тивӗҫлӗ ҫынсене суйласа лартма май парать.

Совет ҫӗршывӗ пирӗн государство вӑрҫӑн йывӑр тӗрӗслевӗсене чыслӑн тӳссе ирттернӗ хыҫҫӑн суйлава хатӗрленме тытӑнать. Пирӗн халӑх хамӑрӑн чи лайӑх ҫынсене—Отечественнӑй вӑрҫӑн ҫапӑҫу хирӗсенче хӑйсен вӑйӗпе пурнӑҫне шеллемен ҫынсене тата хамӑрӑн Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн тылра ҫӗрӗн-кунӗн тӑрӑшса ӗҫленӗ ҫынсене пӗлет. Малта пыракан пиншер граждан суйлав комиссийӗсене кӗрсе суйлав кампанине ертсе пырӗҫ. Чи лайӑххисенчен лайӑххисене вара СССР Верховный Совечӗн депутатне суйлама кандидата тӑратӗҫ.

Пирӗн халӑх коммунистсен аслӑ партине, Ленин—Сталин партине юратса шанса тӑрать. Вӑл парти совет халӑхне фашистла захватчиксене хирӗҫ пынӑ кӗрешӳре организацилесе хавхалантарса пычӗ. Парти организацийӗсем умӗнче мӗнпур ӗҫҫыннисене «СССР Верховный Советне суйламалли Положение» ӑнлантарса парас пысӑк задача тӑрать. Сталинла аслӑ Конституцин Положенийӗсене, совет гражданинӗн прависемпе обязанноҫӗсене, суйлав вӑхӑтӗнчи унӑн тивӗҫне ӑнлантарса парасси пропагандистсемпе агитаторсен таса обязанноҫӗ пулса тӑрать. Эпир социализмла демократи Германи фашизмне ҫӗнтернӗ историллӗ тапхӑрта пурӑнатпӑр. Сталинла Конституци ялавӗ айӗнче эпир Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑра кӗрешсе ҫӗнтертӗмӗр. Вӑл, Сталин юлташ кӑтартса панӑ пек, «фашизма айӑплакан акт, социализмпа демократие никам та ҫӗнтерес ҫукки ҫинчен калакан акт» пулса тӑрать

Сталинла Конституци айӗнче Совет ҫӗршывӗ коммунизм ҫулӗпе ҫӗнӗ те аслӑ ҫӗнтерӳсем патне малалла кайӗ.

(«Правда» хаҫатӑн октябрӗн 12-мӗшӗнчи умстатьи).

СССР Верховный Советне суйламалли ПОЛОЖЕНИ

1-мӗш сыпӑк
СУЙЛАМАЛЛИ ЙӖРКЕ

1-мӗш статья. СССР Конституцийӗн 134-мӗш статьи тӑрӑх, СССР Верховный Совечӗн депутачӗсене суйлавҫӑсем пурне те тивӗҫ, пӗртан тата тӳрех суйламалли правӑпа вӑрттӑн сасӑласа суйлаҫҫӗ.

2-мӗш статья. СССР Конституцийӗн 135-мӗш статьи тӑрӑх, депутатсене суйланӑ ҫӗре пурте хутшӑнма пултараҫҫӗ: ССР Союзӗн 18 ҫул тултарнӑ пур гражданӗсен те, мӗнле рассӑпа мӗнле наци ҫынни пулнине, арҫын е хӗрарӑм пулнине, мӗнле тӗн тытнине, мӗн чухлӗ вӗреннине, пӗр вырӑнта пурӑннипе пурӑнманнине, мӗнле социальнӑй сийрен тухнине, пурлӑхӗ мӗнлине тата ӗлӗк мӗн ӗҫпе пурӑннине пӑхмасӑр,—ӑсран тухнӑ ҫынсемсӗр тата судпа айӑпласа суйлав прависӗр хӑварнӑ ҫынсемсӗр пуҫне,—пурин те СССР Верховный Совечӗн депутачӗсене суйлама право пур.

3-мӗш статья. ССР Союзӗн 23 ҫул тултарнӑ кашни гражданинӗ, вӑл мӗнле рассӑпа мӗнле наци ҫынни пулнине, арҫын е хӗрарӑм пулнине, мӗнле тӗн тытнине, мӗн чухлӗ вӗреннине, пӗр вырӑнта пурӑннипе пурӑнманнине, мӗнле социальнӑй сийрен тухнине, пурлӑхӗ мӗнлине тата ӗлӗк мӗн ӗҫпе пурӑннине пӑхмасӑр, СССР Верховный Совет депутатне суйланма пултарать.

4-мӗш статья. СССР Конституцийӗн 136-мӗш статьи тӑрӑх, депутатсене суйланӑ чух пурин те пӗртан право пулать: кашни гражданинӑн пӗр сасӑ пулать; СССР Верховный Совечӗн суйлавне пур граждансем те пӗртан тивӗҫпе хутшӑнаҫҫӗ.

5-мӗш статья. СССР Конституцийӗн 137-мӗш статьи тӑрӑх, СССР Верховный Советне суйлас тата суйланас правӑпа хӗрарӑмсем арҫынсемпе пӗртанах усӑ кураҫҫӗ.

6-мӗш статья. СССР Конституцийӗн 138-мӗш статьи тӑрӑх, Хӗрлӗ Ҫарта пурӑнакан граждансем СССР Верховный Советне суйлас тата суйланас правӑпа ытти мӗнпур граждансемпе пӗртанах усӑ кураҫҫӗ.

7-мӗш статья. СССР Конституцийӗн 139-мӗш статьи тӑрӑх, депутатсене тӳрех суйламалла пулать: СССР Верховный Совечӗн депутачӗсене граждансем тӳрех хӑйсем суйлаҫҫӗ.

8-мӗш статья. СССР Конституцийӗн 140-мӗш статьи тӑрӑх, СССР Верховный Совечӗн депутачӗсене суйланӑ чухне вӑрттӑн сасӑлаҫҫӗ.

9-мӗш статья. СССР территорийӗнче пурӑнакан, анчах СССР гражданӗсем мар, урӑх ҫӗршывсен гражданӗсем пулса тӑракан ҫынсем СССР Верховный Советне суйлама та суйланма та пултараймаҫҫӗ.

10-мӗш статья. СССР Конституцийӗн 141-мӗш статьи тӑрӑх, СССР Верховный Совечӗн депутатне суйламалли кандидатсене суйлав округӗсем тӑрӑх тӑратаҫҫӗ.

11-мӗш статья. СССР Верховный Советне суйланӑ чух пулакан тӑкаксене государство тӳлет.

II-мӗш сыпӑк
СУЙЛАВҪӐСЕН СПИСОКӖСЕМ

12-мӗш статья. Суйлавҫӑсен списокне пур граждансене те,—суйлав прави пуррисене, списока тунӑ вӑхӑтра пӗр-пӗр Совет территорийӗнче (ялан е вӑхӑтлӑха) пурӑнаканнисене, суйлав кунӗ тӗлне 18 ҫула ҫитнисене,—кӗртеҫҫӗ.

13-мӗш статья. Суйлавҫӑсене кирек кама та пӗр суйлав списокне кӑна кӗртеҫҫӗ, вӗсене темиҫе списока кӗртме юрамасть.

14-мӗш статья. Суйлавҫӑсен списокне суд приговорӗсем тӑрӑх суйлав прависӗр хӑварнӑ ҫынсене суд приговорӗнче суйлав прависӗр хӑварма кӑтартнӑ пӗтӗм срок хушшинче кӗртмеҫҫӗ, ҫавӑн пекех тата закон кӑтартнӑ йӗрке тӑрӑх ӑсран тухнӑ тесе йышӑннӑ ҫынсене кӗртмеҫҫӗ.

15-мӗш статья. Суйлавҫӑсен списокӗсене хуласенче ӗҫҫынни депутачӗсен хула Совечӗсен исполкомӗсем тӑваҫҫӗ; районсене пайланакан хуласенче—район Совечӗсен исполкомӗсем; поселоксенче — поселок Совечӗсен исполкомӗсем; ялсенче —ӗҫҫынни депутачӗсен ял (станица, хутор, кишлак, аул) Совечӗсен исполкомӗсем е волаҫсенчи ӗҫҫынни депутачӗсен Совечӗсен исполкомӗсем тӑваҫҫӗ.

16-мӗш статья. Ҫар чаҫӗсенче тата ҫар соединенийӗсенче тӑракан суйлавҫӑсен списокӗсене командовани тӑвать, вӗсене командир алӑ пусать. Ҫарта тӑракан ытти мӗнпур ҫынсене суйлавҫӑсен списокне вӗсем пурӑнакан вырӑнсенче унти ӗҫҫынни депутачӗсен Совечӗсен исполкомӗсем кӗртеҫҫӗ.

17-мӗш статья. Суйлавҫӑсен списокӗсене кашни суйлав участокӗ тӑрӑх, СССР Верховный Совечӗн Президиумӗ ҫирӗплетнӗ формӑпа тата алфавит йӗркипе тӑваҫҫӗ, унта суйлавҫӑн хушаматне, ятне, ашшӗ ятне, вӑл миҫе ҫултине тата ӑҫта пурӑннине кӑтартаҫҫӗ, списока ӗҫҫынни депутачӗсен Совечӗн исполкомӗн председателӗпе секретарӗ алӑ пусаҫҫӗ.

18-мӗш статья. Суйлав умӗн 30 кун малтан ӗҫҫынни депутачӗсен Совечӗсен исполкомӗсем суйлавҫӑсен списокӗсене пурте пӑхса тухма кӑларса ҫакаҫҫӗ, е ҫав списоксемпе Совет ҫуртӗнче е суйлав участокӗнче паллашма суйлавҫӑсене май туса параҫҫӗ.

19-мӗш статья. Суйлавҫӑсен тӗп списокӗсем ӗҫҫынни депутачӗсен тивӗҫлӗ Совечӗнче тата ҫар чаҫӗсенче е ҫар соединенийӗсенче упранса тӑраҫҫӗ.

20-мӗш статья. Суйлавҫӑсен списокне ҫырса пӗлтернӗ вӑхӑтпа суйлав кунӗ хушшинче суйлавҫӑ урӑх вырӑна куҫсан, кивӗ вырӑнти ӗҫҫынни депутачӗсен Совечӗн исполкомӗ ӑна СССР Верховный Совечӗн Президиумӗ йышӑннӑ формӑпа «Сасӑлама право паракан удостоверени» парать те суйлавҫӑсен списокӗнче — «тухса кайнӑ», тесе паллӑ тӑвать; яланлӑха е вӑхӑтлӑха пурӑнма куҫнӑ ҫӗнӗ вырӑнта суйлавҫӑ хӑй камне пӗлтерекен удостоверени, ҫавӑн пекех тата «Сасӑлама право паракан удостоверени» кӑтартсан, ӑна суйлавҫӑсен списокне кӗртеҫҫӗ.

21-мӗш статья. Суйлавҫӑсен списокӗнче тӗрӗсмарлӑх пурри ҫинчен (списока кӗртменни, списокран кӑларни, хушамата, ята, ашшӗ ятне пӑсса ҫырни, суйлав прависӗр хӑварнӑ ҫынсене списока тӗрӗс мар кӗртни ҫинчен) ҫырнӑ заявление списока ҫырса пӗлтернӗ ӗҫҫынни депутачӗсен Совечӗн исполкомне памалла. Ӗҫҫынни депутачӗсен Совечӗн исполкомӗ суйлавҫӑсен списокӗнчи тӗрӗсмарлӑхсем ҫинчен панӑ кашни заявление виҫӗ кун хушшинче пӑхса тухма тивӗҫ.

22-мӗш статья. Суйлавҫӑсен списокӗнчи тӗрӗсмарлӑхсем ҫинчен панӑ заявление пӑхса тухнӑ хыҫҫӑн, ӗҫҫынни депутачӗсен Совечӗн исполкомӗ суйлавҫӑсен списокне е кирлӗ тӳрлетӳсем кӗртме тивӗҫ, е заявлени паракана унӑн заявленине мӗн сӑлтавпа сирни ҫинчен справка пама тивӗҫ.

23-мӗш статья. Ӗҫҫынни депутачӗсен Совечӗн исполкомӗ суйлавҫӑсен списокӗнчи тӗрӗсмарлӑх ҫинчен йышӑннӑ решенипе килӗшмесен, заявлени паракан ҫын Халӑх Судне жалоба пама пултарать. Халӑх Сучӗ виҫӗ кун хушшинче, судӑн уҫӑ ларӑвӗнче, заявлени паракана тата Совет исполкомӗн представительне чӗнсе, списокри тӗрӗсмарлӑх ҫинчен панӑ жалобӑна пӑхса тухма тивӗҫ, хӑйӗн решенине заявлени паракана та, ҫавӑн пекех Совет исполкомне те ҫийӗнчех пӗлтерме тивӗҫ. Халӑх Сучӗн решенийӗ татӑклӑ.

III-мӗш сыпӑк
СОЮЗ СОВЕТНЕ ТАТА НАЦИОНАЛЬНОҪСЕН СОВЕТНЕ СУЙЛАМАЛЛИ СУЙЛАВ ОКРУГӖСЕМ

24-мӗш статья. СССР Конституцийӗн 34-мӗш статьи тӑрӑх, Союз Советне ССР Союзӗн гражданӗсем суйлав округӗсем тӑрӑх суйлаҫҫӗ. Союз Советне суйламалли суйлав округӗнче халӑх йышӗ 300.000 ҫын пулмалла. Союз Советне суйламалли кашни суйлав округӗ пӗр депутат суйласа ярать.

25-мӗш статья. СССР Конституцийӗн 35-мӗш статьи тӑрӑх, Национальноҫсен Советне ССР Союзӗн гражданӗсем союзлӑ тата автономиллӗ республикӑсем, автономиллӗ облаҫсемпе наци округӗсем тӑрӑх суйлаҫҫӗ.

Национальноҫсен Советне суйламалли суйлав округӗсем ҫакӑн пек нормӑпа пулаҫҫӗ: кашни союзлӑ республикӑра—25 округ, кашни автономиллӗ республикӑра —11 округ, кашни автономиллӗ облаҫра —5 округ тата кашни наци округӗнче —1 суйлав округӗ. Национальноҫсен Советне суйламалли кашни суйлав округӗ пӗр депутат суйласа ярать.

26-мӗш статья. Союз Советне тата Национальноҫсен Советне суйламалли суйлав округӗсене СССР Верховный Совет Президиумӗ тӑвать.

Союз Советне тата Национальноҫсен Советне суйламалли суйлав округӗсен списокне СССР Верховный Совет Президиумӗ суйлав кунӗччен икӗ уйӑх маларах пӗлтерет.

IV-мӗш сыпӑк
СУЙЛАВ УЧАСТОКӖСЕМ

27-мӗш статья. Суйлав бюллетенӗсене йышӑнма тата сасӑсене шутласа тухма суйлав округне кӗрекен хуласемпе районсен территорийӗ суйлав участокӗсене пайланать. Союз Советне суйлама та Национальноҫсен Советне суйлама та пӗр участоксемех пулаҫҫӗ.

28-мӗш статья. Суйлав участокӗсене хуласенче—ӗҫҫынни депутачӗсен хула Совечӗсен исполкомӗсем; районсене пайланакан хуласенче—ӗҫҫынни депутачӗсен район Совечӗсен исполкомӗсем; ялти вырӑнсенче—ӗҫҫынни депутачӗсен район тата уезд Совечӗсен исполкомӗсем тӑваҫҫӗ. Суйлав участокӗсене суйлавччен 45 кун маларах тӑваҫҫӗ.

29-мӗш статья. Хуласем, промышленноҫлӑ пунктсем, ҫавӑн пекех ялсем тата ял Совет территорийӗсем, унта пурӑнакансем 2.000 ҫын ытла шутланаҫҫӗ пулсан, суйлав участокӗсене пайланаҫҫӗ; ун пек чухне пӗр суйлав участокӗнче пурӑнакансен хисепӗ 1.500—3.000 ҫын пулмалла.

30-мӗш статья. Ял Совет территорийӗнче пурӑнакансен йышӗ 2.000 ҫынран ытла мар пулсан, унта пӗр суйлав участокӗ пулать; 500 ҫынран пуҫласа 2.000 ҫын таран пурӑнакан кашни станицӑра, ялта, кишлакра, аулра уйрӑм суйлав участокӗ тӑваҫҫӗ. 500 ҫынран сахалтарах, анчах та 300 ҫынран ытларах халӑх пурӑнакан ялсенче е ялсен ушкӑнӗнче, вӑл ялсем суйлав участокӗн центрӗнчен 10 километртан аякрах лараҫҫӗ пулсан, уйрӑм суйлав участокӗсем тума юрать.

31-мӗш статья. Ҫурҫӗрпе хӗвелтухӑҫри инҫетри районсенче, вак ялсем ытларах ҫӗрте, 100 ҫынран кая мар халӑх хисепӗпе те суйлав участокӗсем тума юрать.

Ҫурҫӗрти наци округӗсенче, ҫавӑн пекех ту-сӑртлӑ тата куҫса ҫӳрекен халӑх пурӑнакан районсенче 100 ҫынран сахалтарах, анчах 50 ҫынран кая мар пурӑнакан вырӑнсенче те суйлав участокӗсем тума юрать.

32-мӗш статья. Ҫар чаҫӗсем тата ҫар соединенийӗсем уйрӑм суйлав участокӗсем пулса тӑраҫҫӗ, вӗсенче суйлавҫӑсен хисепӗ 50 ҫынран кая мар тата 3.000 ҫынран ытла мар пулмалла, вӑл участоксем вара чаҫсем е ҫар соединенийӗсем тӑракан вырӑнсенчи суйлав округне кӗреҫҫӗ.

33-мӗш статья. Суйлав кунӗнче ишсе ҫӳрекен кимӗсем ҫинче, унта суйлавҫӑсен хисепӗ 25 ҫынран кая мар пулсан, уйрӑм суйлав участокӗсем пулма пултараҫҫӗ, вӗсем кимӗ ҫырӑннӑ вырӑнти суйлав округӗсене кӗреҫҫӗ.

34-мӗш статья. Больницӑсенче, ача ҫуратмалли ҫуртсенче, санаторисенче, инвалидсен ҫурчӗсенче, унта суйлавҫӑсен хисепӗ 50 ҫынран кая мар пулсан, уйрӑм суйлав участокӗсем тӑваҫҫӗ.

Темиҫе корпуслӑ больницӑсенче, кашни корпусӗнче суйлавҫӑсен хисепӗ 50 ҫынран кая мар пулсан, кашни корпусра уйрӑм суйлав участокӗсем тума юрать.

35-мӗш статья. Инҫе ҫула ҫӳрекен пассажирсен поезӗсенче «Сасӑлама право паракан удостоверениллӗ» ҫынсенчен суйлав кунӗнче ҫул ҫинчех суйлав бюллетенӗсене йышӑнма суйлав участокӗсем тӑваҫҫӗ.

V-мӗш сыпӑк
СУЙЛАВ КОМИССИЙӖСЕМ

36-мӗш статья. СССР Верховный Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Тӗп суйлав комиссине рабочисемпе служащисен профсоюз организацийӗсен, коопераци организацийӗсен, коммунистсен партийӗн организацийӗсен, ҫамрӑксен организацийӗсен, культурӑпа техника тата наука обществисен, ытти обществӑллӑ организацисемпе ӗҫҫыннисен законлӑ йӗркепе регистрациленӗ обществисен представителӗсенчен, ҫавӑн пекех тата предприятисенчи рабочисемпе служащисен пухӑвӗсен, ҫар чаҫӗнчи ҫар ҫыннисен пухӑвӗсен, колхозсенчи, ялсемпе волаҫсенчи хресченсен пухӑвӗсен, совхозсенчи рабочисемпе служащисен пухӑвӗсен представителӗсенчен тӑваҫҫӗ.

37-мӗш статья. Тӗп суйлав комиссинче ҫаксем пулаҫҫӗ: председатель, председатель заместителӗ, секретарь тата 12 член. Тӗп суйлав комиссине СССР Верховный Совет Президиумӗ суйлавччен 55 кун маларах ҫирӗплетет.

38-мӗш статья. Тӗп суйлав комиссийӗ ҫак ӗҫсене тӑвать:

а) ССР Союзӗн пӗтӗм территорийӗнче суйлавсем пынӑ вӑхӑтра «СССР Верховный Советне суйламалли Положение» пурнӑҫа тӗрӗс кӗртсе пынине сӑнаса тӑрать;

б) суйлав комиссийӗсем тӗрӗс мар тунисем ҫинчен панӑ жалобӑсене пӑхса тухать тата жалобӑсем тӑрӑх татӑклӑ решенисем йышӑнать;

в) суйлав ещӗкӗсен образецӗсене, суйлав бюллетенӗсен формипе тӗсне, Округри суйлав комисси кандидатсене регистрацилемелли протокол формине, сасӑсене шутласа тухмалли протокол формине, суйланни ҫинчен паракан удостоверени формине, суйлав комиссисен пичет образецне туса парать;

г) СССР Верховный Советне суйланӑ депутатсене регистрацилет;

д) Союз Совечӗн тата Национальноҫсен Совечӗн мандат комиссийӗсене суйлав вӑхӑтӗнче илнӗ хутсемпе документсене парать.

39-мӗш статья. Кашни союзлӑ тата автономиллӗ республикӑра, автономиллӗ облаҫра тата наци округӗнче Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлеме союзлӑ тата автономиллӗ республикӑн, автономиллӗ облаҫӑн тата наци округӗн Суйлав комиссийӗсене тӑваҫҫӗ.

40-мӗш статья. Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Суйлав комиссийӗсене рабочисемпе служащисен профсоюз организацийӗсен, коопераци организацийӗсен, коммунистсен партийӗн организацийӗсен, ҫамрӑксен организацийӗсен, культурӑпа техника тата наука обществисен, ӗҫҫыннисен законлӑ йӗркепе организациленӗ ытти обществӑллӑ организацийӗсен представителӗсенчен, ҫавӑн пекех тата предприятисенчи рабочисемпе служащисен пухӑвӗсен, ҫар чаҫӗсенчи ҫар ҫыннисен пухӑвӗсен, колхозсенчи, ялсемпе волаҫсенчи хресченсен пухӑвӗсен, совхозсенчи рабочисемпе служащисен пухӑвӗсен представителӗсенчен тӑваҫҫӗ.

41-мӗш статья. Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен союзлӑ тата автономиллӗ республикӑсен, автономиллӗ облаҫсен тата наци округӗсен Суйлав комиссийӗсенче ҫаксем пулаҫҫӗ: председатель, председатель заместителӗ, секретарь тата 6—10 член. Вӗсене союзлӑ тата автономиллӗ республикӑсен Верховный Совечӗсен Президиумӗсем тата автономиллӗ облаҫсемпе наци округӗсенчи ӗҫҫынни депутачӗсен Совечӗсен исполкомӗсем суйлавччен 50 кун маларах ҫирӗплетеҫҫӗ.

42-мӗш статья. Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен союзлӑ, автономиллӗ республикӑсен, автономиллӗ облаҫсен тата наци округӗсен Суйлав комиссийӗ ҫак ӗҫсене тӑвать:

а) Национальноҫсен Советне суйланӑ вӑхӑтра республикӑн, автономиллӗ облаҫӑн, наци округӗн территорийӗнче «СССР Верховный Советне суйламалли Положение« пурнӑҫа тӗрӗс кӗртсе пынине сӑнаса тӑрать;

б) Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен суйлав комиссийӗсем тӗрӗс мар тунисем ҫинчен панӑ жалобӑсене пӑхса тухать.

43-мӗш статья. Союз Советне суйлама тунӑ кашни округра Союз Советне суйламалли Округри суйлав комиссийӗ пулать.

44-мӗш статья. Союз Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округри суйлав комиссийӗсене рабочисемпе служащисен профсоюз организацийӗсен, коопераци организацийӗсен, коммунистсен партийӗн организацийӗсен, ҫамрӑксен организацийӗсен, культурӑпа техника тата наука обществисен, ӗҫҫыннисен законлӑ йӗркепе регистрациленӗ ытти обществӑллӑ организацийӗсемпе обществисен представителӗсенчен, ҫавӑн пекех тата предприятисенчи рабочисемпе служащисен пухӑвӗсен, ҫар чаҫӗсенчи ҫар ҫыннисен пухӑвӗсен, колхозсенчи, ялсемпе волаҫсенчи хресченсен пухӑвӗсен, совхозсенчи рабочисемпе служащисен пухӑвӗсен представителӗсенчен тӑваҫҫӗ.

45-мӗш статья. Союз Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округри суйлав комиссийӗсенче ҫаксем пулаҫҫӗ: председатель, председатель заместителӗ, секретарь тата 8 член. Вӗсене крайсене е облаҫсене пайланакан республикӑсенче — ӗҫҫынни депутачӗсен крайсемпе облаҫсенчи Совечӗсен исполкомӗсем, крайсемпе облаҫсене пайланман республикӑсенче — республикӑсен Верховный Совечӗсен Президиумӗсем суйлавччен 50 кун маларах ҫирӗплетеҫҫӗ.

46-мӗш статья. Союз Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округри суйлав комиссийӗ ҫак ӗҫсене тӑвать:

а) Союз Советне суйланӑ вӑхӑтра суйлав округӗн территорийӗнче «СССР Верховный Советне суйламалли Положение» пурнӑҫа тӗрӗс кӗртсе пынине сӑнаса тӑрать;

б) участоксенчи суйлав комиссийӗсем тӗрӗс мар туни ҫинчен панӑ жалобӑсене пӑхса тухса, вӗсем ҫинчен тивӗҫлӗ решенисем йышӑнать;

в) ӗҫҫынни депутачӗсен Совечӗсен тивӗҫлӗ исполкомӗсем суйлав участокӗсене вӑхӑтра туса хунине сӑнаса тӑрать;

г) суйлавҫӑсен списокӗсене вӑхӑтра тунине тата вӗсем ҫинчен пурне те пӗлтернине сӑнаса тӑрать;

д) СССР Конституцийӗ тата «СССР Верховный Советне суйламалли Положени» хушнисене пӑхӑнса депутата суйлама тӑратнӑ кандидатсене регистрацилет;

е) участокри суйлав комиссийӗсене Союз Советне суйламалли йышӑннӑ формӑллӑ суйлав бюллетенӗсем парать;

ж) сасӑсене шутласа тухать тата округ тӑрӑх суйлав результачӗсене палӑртать;

з) суйланӑ депутата ӑна суйлани ҫинчен удостоверени парать;

и) Тӗп суйлав комиссине суйлав вӑхӑтӗнче илнӗ документсемпе хутсене тӑратать.

47-мӗш статья. Национальноҫсен Советне суйламалли кашни округра Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округри суйлав комиссине тӑваҫҫӗ.

48-мӗш статья. Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округри суйлав комиссийӗсене рабочисемпе служащисен профсоюз организацийӗсен, коопераци организацийӗсен, коммунистсен партийӗн организацийӗсен, ҫамрӑксен ор-

Юлашки 2-мӗш страницӑра.

СССР Верховный Советне суйламалли ПОЛОЖЕНИ

Юлашки. Пуҫламӑшӗ 1-мӗш страницӑра.

ганизацийӗсен, культурӑпа техника тата наука обществисен, ӗҫсыннисен законлӑ йӗркепе регистрациленӗ ытти обществӑллӑ организацийӗсемпе обществисен представителӗсенчен, ҫавӑн пекех тата предприятисенчи рабочисемпе служащисен пухӑвӗсен, ҫар чаҫӗсенчи ҫар ҫыннисен пухӑвӗсен, колхозсенчи, ялсемпе волӑҫсенчи хресченсен пухӑвӗсен, совхозсенчи рабочисемпе служащисен пухӑвӗсен представителӗсенчен тӑвассӗ.

49-мӗш статья. Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округри суйлав комиссийӗсенче ҫаксем пулассӗ: председатель, председатель заместителӗ, секретарь тата 8 член. Вӗсене союзлӑ тата автономиллӗ республикӑсен Верховный Совечӗсен Президиумӗсем тата автономиллӗ облаҫсемпе наци округӗсен ӗҫсынни депутачӗсен Совечӗсен исполкомӗсем суйлавччен 50 кун маларах ҫирӗплетессӗ.

50-мӗш статья. Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округри суйлав комиссийӗ ҫак ӗҫсене тӑвать:

а) Национальноҫсен Советне суйланӑ вӑхӑтра хӑйӗн суйлав округӗн территорийӗнче «СССР Верховный Советне суйламалли Положение» пурнӑҫа тӗрӗс кӗртсе пынине сӑнаса тӑрать;

б) участоксенчи суйлав комиссийӗсем тӗрӗс мар туни ҫинчен панӑ жалобӑсене пӑхса тухса, вӗсем пирки тивӗҫлӗ решенисем йышӑнать;

в) ӗҫсынни депутачӗсен Совечӗсен тивӗҫлӗ исполкомӗсем суйлав участокӗсене вӑхӑтра туса хунине сӑнаса тӑрать;

г) суйлавҫӑсен списокӗсене вӑхӑтра тунине тата вӗсем ҫинчен пурне те пӗлтернине сӑнаса тӑрать;

д) СССР Конституцийӗ тата «СССР Верховный Советне суйламалли Положени» хушнисене пӑхӑнса депутата суйлама тӑратнӑ кандидатсене регистрацилет;

е) участокри суйлав комиссийӗсене Национальноҫсен Советне суйламалли йышӑннӑ формӑллӑ суйлав бюллетенӗсем парать;

ж) сасӑсене шутласа тухать тата округ тӑрӑх суйлав результачӗсене палӑртать;

з) суйланӑ депутата ӑна суйлани ҫинчен удостоверени парать;

и) союзлӑ тата автономиллӗ республикӑсенче Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен суйлав комиссине е автономиллӗ облаҫсенче е наци округӗсенче Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен суйлав комиссине суйлав вӑхӑтӗнче илнӗ документсемпе хутсене тӑратать.

51-мӗш статья. Участоксенчи суйлав комиссийӗсене рабочисемпе служащисен профсоюз организацийӗсен, коопераци организацийӗсен, коммунистсен партийӗн организацийӗсен, ҫамрӑксен организацийӗсен, культурӑпа техника тата наука обществисен, ӗҫсыннисен законлӑ йӗркепе регистрациленӗ ытти обществӑллӑ организацийӗсемпе обществисен представителӗсенчен, ҫавӑн пекех тата предприятисенчи рабочисемпе служащисен пухӑвӗсен, ҫар чаҫӗсенчи ҫар ҫыннисен пухӑвӗсен, колхозсенчи, ялсемпе волӑҫсенчи хресченсен пухӑвӗсен, совхозсенчи рабочисемпе служащисен пухӑвӗсен представителӗсенчен тӑвассӗ.

52-мӗш статья. Участоксенчи суйлав комиссийӗсенче ҫаксем пулассӗ: председатель, председатель заместителӗ, секретарь тата 4—8 член. Суйлав участокӗнче халӑх йышӗ 300 ҫынран каярах пулсан, участокри суйлав комиссинче председатель, секретарь тата 1—3 член пулать. Вӗсене хуласенче—ӗҫсынни депутачӗсен хула Совечӗсен исполкомӗсем; районсене пайланакан хуласенче—районри Советсен исполкомӗсем; ялсенче—районри е уездри Советсен исполкомӗсем суйлавччен 40 кун маларах ҫирӗплетессӗ.

53-мӗш статья. Участокри суйлав комиссийӗ ҫак ӗҫсене тӑвать:

а) суйлавҫӑсен списокӗнчи тӗрӗсмарлӑхсем ҫинчен заявленисем йышӑнса, вӗсене ҫав списока туса хатӗрленӗ Советӑн исполкомне пӑхса тухма тӑратать;

б) суйлав участокӗнче суйлав бюллетенӗсене йышӑнать;

в) суйлама тӑратнӑ кашни кандидатшӑн панӑ сасӑсене уйрӑмӑн шута илсе тухать;

г) суйлав вӑхӑтӗнче илнӗ документсемпе хутсене Союз Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округри суйлав комиссине тата Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округри суйлав комиссине парать.

54-мӗш статья. Тӗп суйлав комиссийӗн, Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен союзлӑ тата автономиллӗ республикӑсенчи суйлав комиссийӗсен, автономиллӗ облаҫсемпе наци округӗсенчи суйлав комиссийӗсен, Союз Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округри суйлав комиссийӗсен тата Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округри суйлав комиссийӗсен, ҫавӑн пекех тата Участоксенчи суйлав комиссийӗсен ларӑвӗсем, вӗсенче пӗтӗм комисси йышӗнчен ҫурри ытла пулсан, тӗрӗс тесе шутланаҫҫӗ.

55-мӗш статья. Суйлав комиссийӗсенче пур ыйтусене те сасӑсен ахаль ытларахӑшӗпе татса параҫҫӗ; сасӑсем пӗртан пулсан—председателӗн сасси ытларах вӑй парать.

56-мӗш статья. Тӗп суйлав комиссийӗн, Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен союзлӑ тата автономиллӗ республикӑсенчи, автономиллӗ облаҫсемпе наци округӗсенчи суйлав комиссийӗсен, Союз Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округри суйлав комиссийӗсен тата Участоксенчи суйлав комиссийӗсен Тӗп суйлав комиссийӗ туса панӑ образеллӑ хӑйсен пичечӗсем пулаҫҫӗ.

VI-мӗш сыпӑк

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТНЕ ДЕПУТАТА СУЙЛАМА КАНДИДАТСЕМ ТӐРАТМАЛЛИ ЙӖРКЕ

57-мӗш статья. СССР Конституцийӗн 141-мӗш статьи тӑрӑх, СССР Верховный Советне депутата суйлама кандидатсем тӑратмалли правӑна обществӑллӑ организацисемпе ӗҫсыннисен обществисене пана: коммунистсен партийӗн организацийӗсем, профсоюзсем, коопераци организацийӗсем, ҫамрӑксен организацийӗсем тата культура обществисем кандидатсем тӑратма пултараҫҫӗ.

58-мӗш статья. Кандидатсем тӑратас правӑна обществӑллӑ организацисемпе ӗҫсыннисен обществисен центрти органӗсем те, вӗсен республикӑсенчи, крайсенчи, облаҫсенчи, уездсенчи тата районсенчи органӗсем те, ҫавӑн пекех предприятисенчи рабочисемпе служащисен, ҫар чаҫӗсенчи ҫар ҫыннисен, колхозсенчи, ялсемпе волӑҫсенчи хресченсен, совхозсенчи рабочисемпе служащисен пухӑвӗсем те пурнӑҫа кӗртсе пыраҫҫӗ.

59-мӗш статья. СССР Верховный Советне депутата суйлама тӑратнӑ кандидат пӗр суйлав округӗнче ҫеҫ суйланма пултарать.

60-мӗш статья. Депутата суйлама тӑратнӑ кандидатсем Союз Советне тата Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округри суйлав комиссийӗсен членӗнче, ҫавӑн пекех тата вӗсене депутата суйлама кандидата тӑратнӑ округра Участокри суйлав комиссийӗсен членӗнче те тӑма пултараймаҫҫӗ.

61-мӗш статья. СССР Верховный Советне депутата суйлама кандидат тӑратакан обществӑллӑ организацин е ӗҫсыннисен обществин Округри суйлав комиссине ҫак документсене тӑратмалла:

а) депутата суйлама кандидат тӑратнӑ пуху е лару президиумӗн членӗсем алӑ пуснӑ протокола. Протоколра ӑна алӑ пусакансем ӑҫта пурӑннине, кандидат тӑратнӑ организаци ятне, депутата суйлама кандидат тӑратнӑ пуху е лару ӑҫта, хӑш вӑхӑтра пулнине, унта миҫе ҫын пулнине кӑтартмалла, ҫавӑнпа пӗрлех протоколра депутата суйлама тӑратнӑ кандидатӑн хушаматне, ятне, ашшӗ ятне, вӑл миҫе ҫултине, ӑҫта пурӑннине, партире тӑнине тӑманнине, мӗн ӗҫпе пурӑннине кӑтартмалла;

б) депутата суйлама тӑратнӑ кандидат ҫав суйлав округӗнче хӑйне тӑратнӑ организаципе баллотировкӑна тӑма килӗшни ҫинчен ҫырнӑ заявлени.

62-мӗш статья. СССР Верховный Советне депутата суйлама кандидатсем тӑратакан обществӑллӑ организацисен е ӗҫсыннисен обществисен пурин те депутата суйлама тӑратнӑ кандидатсене, вӗсене ӑҫта суйламаллине кура, е Союз Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округри суйлав комиссийӗсенче, е Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округри суйлав комиссийӗсенче суйлавччен 30 кун маларах регистрацилемелле.

63-мӗш статья. Союз Советне суйлас тата Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округри суйлав комиссийӗсен обществӑллӑ организацисемпе ӗҫсыннисен обществисем СССР Конституцийӗ тата «СССР Верховный Советне суйламалли Положени» хушнисене пӑхӑнса тӑратнӑ кандидатсене пурне те регистрацилемелле.

64-мӗш статья. СССР Верховный Советне депутата суйлама регистрациленӗ кашни кандидатӑн хушаматне, ятне, ашшӗ ятне, вӑл миҫе ҫултине, мӗнле ӗҫпе пурӑннине, партире тӑнине тӑманнине тата кандидат тӑратнӑ организаци ятне Союз Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округри суйлав комиссийӗ тата Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округри суйлав комиссийӗ суйлавччен 25 кун маларах пичетлесе пӗлтерессӗ.

65-мӗш статья. СССР Верховный Советне депутата суйлама регистрациленӗ пур кандидатсене те суйлав бюллетеньне обязательнӑ кӗртмелле.

66-мӗш статья. Союз Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округри суйлав комиссийӗ депутата суйлама тӑратнӑ кандидата регистрацилеме килӗшменни ҫинчен икӗ кун хушшинче Тӗп суйлав комиссине жалоба пама пулать, унӑн решенийӗ вара татӑклӑ пулса тӑрать.

67-мӗш статья. Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округри суйлав комиссийӗ кандидата регистрацилеме килӗшменни ҫинчен икӗ кун хушшинче союзлӑ, автономиллӗ республикӑсенчи, автономиллӗ облаҫсемпе наци округӗсенчи суйлав комиссийӗсене жалоба пама пулать. Вӗсен решенийӗпе те килӗшмесен вара Тӗп суйлав комиссине жалоба пама пулать. Тӗп суйлав комиссийӗн решенийӗ татӑклӑ пулса тӑрать.

68-мӗш статья. Союз Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округри суйлав комиссийӗсен тата Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округри суйлав комиссийӗсен СССР Верховный Советне суйличчен 15 кун малтан суйлав бюллетенӗсене пичетлемелле те Участоксенчи пур суйлав комиссийӗсене те салатса памалла.

69-мӗш статья. Суйлав бюллетенӗсене Тӗп суйлав комиссийӗ йышӑннӑ формӑпа суйлав округӗнче пурӑнакан халӑхсен чӗлхипе пур суйлавҫӑсене те ҫитмелле туса пичетлемелле.

70-мӗш статья. Округри суйлав комиссийӗсенче регистрациленӗ кандидата тӑратнӑ кашни организацие, ҫавӑн пекех тата ССР Союзӗн кашни гражданне, СССР Конституцийӗн 125-мӗш статьи тӑрӑх, ҫав кандидатшӑн пухусенче, пичетре тата урӑх майсемпе те нимӗн чӑрмавсӑр агитацилеме право параҫҫӗ.

VII-мӗш сыпӑк

САСӐЛАМАЛЛИ ЙӖРКЕ

71-мӗш статья. СССР Верховный Советне суйласси пӗр кун хушшинче — пӗтӗм Союзӗпех пӗр кунта пулса иртет.

72-мӗш статья. СССР Верховный Советне суйламалли куна СССР Верховный Совет Президиумӗ суйлавччен икӗ уйӑх малтан палӑртса хурать. Суйлав ӗҫлемен кун пулса иртет.

73-мӗш статья. Суйлав умӗнхи юлашки 20 кун хушшинче Участокри суйлав комиссийӗ кунсеренех суйлав кунӗ ҫинчен тата суйлав ӑҫта пуласси ҫинчен пичетлесе е мӗнле те пулин урӑх майпа суйлавҫӑсене анлӑн пӗлтерсе тӑрать.

74-мӗш статья. Суйлавҫӑсем сасӑ парасси суйлав кунӗнче вырӑнти вӑхӑтпа ирхине 6 сехетрен пуҫласа ҫӗрле 12 сехетчен пулса иртет.

75-мӗш статья. Суйлав кунӗнче ирхине 6 сехетре Участокри суйлав комисси председателӗ комисси членӗсем умӗнче суйлав ещӗкӗсене тата йышӑннӑ формӑпа тунӑ суйлавҫӑсен списокӗ пуррине сукkине тӗрӗслет, ун хыҫҫӑн ещӗке хупса комисси пичечӗпе пичетлесе хурать те суйлавҫӑсене сасӑламашкӑн тытӑнма чӗнет.

76-мӗш статья. Суйлав ҫуртӗнче бюллетеньсене ҫырса тултарма уйрӑм пӳлӗм уйӑраҫҫӗ, унта сасӑланӑ вӑхӑтра сасӑлакансемсӗр пуҫне урӑх никамӑн та, ҫав шутрах Участокри суйлав комиссин членӗсен те пулма юрамасть; бюллетеньсене ҫырса тултармалли пӳлӗме пӗр вӑхӑтрах темиҫе суйлавҫӑ кӗртеҫҫӗ пулсан, пӳлӗме хӑмасемпе е ширмӑсемпе пӗр вӑхӑтра миҫе ҫын кӗртнине кура пӳлсе уйӑрмалла.

77-мӗш статья. Кашни суйлавҫӑ хӑй сасӑлать, сасӑлама вӑл сасӑламалли ҫурта пырать. Суйлавҫӑсем сасӑ парасси вара суйлав бюллетенӗсене суйлав ещӗкне яни пулса иртет.

78-мӗш статья. Суйлав ҫуртне пынӑ суйлавҫӑ Участокри суйлав комиссин секретарьне е ҫав ӗҫе тума хушнӑ Участокри суйлав комиссин членне е паспорт, е колхоз кӗнеки, е профсоюз билечӗ, е вӑл камне ӗнентерекен урӑх удостоверени кӑтартать, вара суйлавҫӑсен списокӗ тӑрӑх тӗрӗсленӗ тата суйлавҫӑсен списокӗнче паллӑ тунӑ хыҫҫӑн, йышӑннӑ формӑллӑ суйлав бюллетенӗсем илет.

79-мӗш статья. Суйлавҫӑ, суйлав бюллетенӗсене ҫырса тултарма уйӑрнӑ пӳлӗмре, кашни суйлав бюллетенӗнче хӑй камшӑн сасӑлама кӑмӑл тӑвать, ҫав кандидатӑн хушаматне хӑварать, ыттисене хуратса хурать; унтан суйлавҫӑ Участокри суйлав комиссийӗ ӗҫлекен пӳлӗме пырать те суйлав бюллетенӗсене суйлав ещӗкне ярать.

80-мӗш статья. Хут пӗлмен пирки е чӑлах пирки суйлав бюллетенӗсене хӑйсем ҫырса тултарма пултарайман суйлавҫӑсем суйлав бюллетенӗсене ҫырса тултармалли пӳлӗме кирек хӑш урӑх суйлавҫӑна та суйлав бюллетенӗсене ҫырса тултарма чӗнсе кӗртме пултараҫҫӗ.

81-мӗш статья. Суйлав ҫуртӗнче сасӑсем панӑ вӑхӑтра суйлав агитацине тума юрамасть.

82-мӗш статья. «СССР Верховный Советне суйламалли Положенин» 20-мӗш статьи тӑрӑх, суйлав ҫуртне «Сасӑлама право паракан удостоверенипе» пынӑ ҫынсене Участокри суйлав комиссийӗ уйрӑм списока ҫырса пырать. Ҫав списока Участокри суйлав комиссийӗн председателӗпе секретарӗ алӑ пусаҫҫӗ.

83-мӗш статья. Суйлав ҫуртӗнчи йӗркелӗхшӗн Участокри суйлав комиссин председателӗ ответ тытать, вӑл хушнисене унта пынӑ ҫынсен пурин те пӑхӑнмалла.

84-мӗш статья. Суйлав кунӗнче ҫӗрле 12 сехетре Участокри суйлав комиссин председателӗ сасӑсем парасси пӗтнӗ тесе пӗлтерет, вара комисси суйлав ещӗкӗсене уҫма тытӑнать.

VIII-мӗш сыпӑк

СУЙЛАВ РЕЗУЛЬТАЧӖСЕНЕ ПАЛӐРТАССИ

85-мӗш статья. Участокри суйлав комиссийӗ сасӑсене шутлакан ҫуртра, сасӑсене шутланӑ чухне, обществӑллӑ организацисен тата ӗҫсыннисен обществисен ятарласа уйӑрнӑ представителӗсем, ҫавӑн пекех тата пичет представителӗсем пулма пултараҫҫӗ.

86-мӗш статья. Участокри суйлав комиссийӗ, ещӗксене уҫса, ещӗксене янӑ бюллетеньсен хисепне сасӑлама хутшӑннӑ ҫынсен хисепӗпе танлаштарса пӑхать те тӗрӗслении результачӗсене протокол ҫине ҫырса хурать.

87-мӗш статья. Участокри суйлав комиссин председателӗ участокри суйлав комиссин мӗнпур членӗсем умӗнче кашни бюллетень тӑрӑх сасӑлании результачӗсене каласа парать.

88-мӗш статья. Сасӑланӑ чухне пӗр кандидатран ытла хӑварнӑ бюллетеньсене, ҫавӑн пекех тата йышӑннӑ образеллӑ мар бюллетеньсене тӗрӗс мар тесе шутлаҫҫӗ.

89-мӗш статья. Суйлав бюллетенӗ тӗрӗссипе тӗрӗс марри пирки иккӗлену тухсан, ыйтӑва Участокри суйлав комиссийӗ сасӑласа татса парать, ҫакна вара протоколра паллӑ тӑваҫҫӗ.

90-мӗш статья. Депутата суйлама тӑратнӑ кашни кандидатшӑн сасӑлании результачӗсене Союз Совечӗн тата Национальноҫсен Совечӗн суйлавӗ енӗпе уйрӑмӑн шутласа ҫыраҫҫӗ.

91-мӗш статья. Участокри суйлав комиссийӗ сасӑлании протоколне йышӑннӑ форма тӑрӑх виҫӗ экземпляр ҫырать. Автономиллӗ республикӑсенчи, автономиллӗ облаҫсемпе наци округӗсенчи Участокри суйлав комиссийӗсем вара ҫав протоколсене тӑватӑ экземпляр ҫыраҫҫӗ. Вӗсене Участокри суйлав комиссин членӗсем пурте, комиссин председателӗпе секретарӗ обязательнӑ алӑ пусаҫҫӗ.

92-мӗш статья. Сасӑлани ҫинчен ҫырнӑ протоколра Участокри суйлав комиссийӗн ҫаксене кӑтартмалла:

а) сасӑ пама пуҫланӑ тата парса пӗтернӗ вӑхӑта;

б) суйлавҫӑсен списокӗнче тӑракан суйлавҫӑсен хисепне;

в) суйлав бюллетенӗсем илнӗ суйлавҫӑсен хисепне;

г) суйлава хутшӑннӑ суйлавҫӑсен хисепне: Союз Советне суйлама хутшӑннисене уйрӑмӑн тата Национальноҫсен Советне суйлама хутшӑннисене уйрӑмӑн кӑтартмалла;

д) Союз Советне суйламалли тата Национальноҫсен Советне суйламалли мӗн чухлӗ бюллетене тӗрӗс мар тесе йышӑннине уйрӑмӑн кӑтартмалла;

е) Союз Советне суйламалли тата Национальноҫсен Советне суйламалли пур кандидатсен хушамачӗсене е чӗрсе пӑрахнӑ бюллетеньсен хисепне уйрӑмӑн кӑтартмалла;

ж) кашни кандидатшӑн панӑ сасӑсен хисепне ҫырса хумалла;

з) Участокри суйлав комиссине панӑ заявленисемпе жалобӑсене кӗскен ҫырса, Участокри суйлав комиссийӗ вӗсем тӑрӑх мӗн йышӑннине кӑтартса памалла.

93-мӗш статья. Сасӑсене шутласа пӗтерсе протокол ҫырнӑ хыҫҫӑн Участокри суйлав комиссин председателӗ комиссин ларӑвӗнче сасӑлании результачӗсене каласа парать.

94-мӗш статья. Сасӑлани ҫинчен Участокри суйлав комиссийӗ ҫырнӑ протоколӑн пӗр экземплярне нарочнӑйпа 24 сехет хушшинче Союз Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округри суйлав комиссине яраҫҫӗ, сасӑлани ҫинчен Участокри суйлав комиссийӗ ҫырнӑ протоколӑн иккӗмӗш экземплярне нарочнӑйпа 24 сехет хушшинче Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округри суйлав комиссине яраҫҫӗ.

95-мӗш статья. Участокри суйлав комисси председателӗн суйлав бюллетенӗсене пурне те, тӗрӗссисене уйрӑмӑн тата тӗрӗс мар тесе йышӑннисене уйрӑмӑн, Союз Совечӗ тӑрӑх уйрӑмӑн тата Национальноҫсен Совечӗ тӑрӑх уйрӑмӑн, Участокри суйлав комиссин пичечӗпе пичетлесе хумалла та, сасӑлани ҫинчен ҫырнӑ протоколӑн юлашки экземплярӗпе тата пичетпе пӗрле сыхласа усрама ҫаксене памалла: хуласенче—ӗҫсынни депутачӗсен хула Совечӗсен исполкомӗсене, районсене пайланакан хуласенче—район Совечӗсен исполкомӗсене, ялсенче—ӗҫсынни депутачӗсен районри е уездри Совечӗсен исполкомӗсене памалла.

96-мӗш статья. Ӗҫсынни депутачӗсен Совечӗсен исполкомӗсем суйлав бюллетенӗсене СССР Верховный Совет Президиумӗ кӑтарту париччен сыхласа усрамалла.

97-мӗш статья. Округри суйлав комиссийӗ сасӑсене шутлакан ҫуртра, сасӑсене шутланӑ чухне, обществӑллӑ организацисен тата ӗҫсыннисен обществисен ятарласа уйӑрнӑ представителӗсем, ҫавӑн пекех тата пичет представителӗсем пулма пултараҫҫӗ.

98-мӗш статья. Округри суйлав комиссийӗ сасӑсене Участоксенчи суйлав комиссийӗсенчен илнӗ протоколсем тӑрӑх шутлать, ҫапла вара депутата суйлама тӑратнӑ кашни кандидатшӑн миҫе сасӑ панине палӑртса хурать.

99-мӗш статья. Союз Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округри суйлав комиссийӗ тата союзлӑ республикӑран Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округри суйлав комиссийӗ сасӑлании протоколне икӗ экземпляр ҫыраҫҫӗ, автономиллӗ республикӑсемпе автономиллӗ облаҫсенчен тата наци округӗсенчен Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округри суйлав комиссийӗсем сасӑлании протоколне виҫӗ экземпляр ҫыраҫҫӗ. Ҫав протоколсене Округри суйлав комиссийӗсен пур членӗсем те, комиссин председателӗпе секретарӗ вара обязательнӑ алӑ пусаҫҫӗ.

100-мӗш статья. Сасӑлани ҫинчен ҫырнӑ Округри суйлав комиссин протоколӗнче ҫаксене кӑтартса памалла:

а) Округра Участокри суйлав комиссийӗсем мӗн чухлине;

б) сасӑлании протоколӗсене тӑратнӑ Участокри суйлав комиссийӗсен хисепне;

в) Округри суйлавҫӑсен пӗтӗм хисепне;

г) суйлав бюллетенӗсене илнӗ суйлавҫӑсен хисепне;

д) сасӑланӑ ҫӗре хутшӑннӑ суйлавҫӑсен хисепне;

е) тӗрӗс мар тесе йышӑннӑ бюллетеньсен хисепне;

ж) пур кандидатсен хушамачӗсене те чӗрсе тухнӑ бюллетеньсен хисепне;

з) депутата суйлама тӑратнӑ кашни кандидатшӑн мӗн чухлӗ сасӑ панине;

и) Округри суйлав комиссине панӑ заявленисемпе жалобӑсене кӗскен ҫырнине тата Округри суйлав комиссийӗ вӗсем тӑрӑх йышӑннӑ решенисене.

101-мӗш статья. Протокола алӑ пуснӑ хыҫҫӑн Округри суйлав комиссин председателӗ комисси ларӑвӗнче суйлавсен результачӗсене каласа парать.

102-мӗш статья. СССР Верховный Совечӗн депутатне суйлама тӑратнӑ кандидат ытларах сасӑ илсен, урӑхла каласан, округра панӑ тата тӗрӗс тесе йышӑннӑ мӗнпур сасӑсен ҫуррине ытларах илсен, вӑл суйланнӑ тесе шутланать.

103-мӗш статья. Округри суйлав комиссин председателӗ депутата суйлама тӑратнӑ кандидата ӑна СССР Верховный Совечӗн депутатне суйлани ҫинчен удостоверени парать.

104-мӗш статья. Сасӑсене шутласа тухнӑ хыҫҫӑн 24 сехетрен кая хӑвармасӑр Союз Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округри суйлав комиссийӗн председателӗ, ҫавӑн пекех тата Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округри суйлав комиссийӗн председателӗ протоколӑн 1-мӗш экземплярне пичет хурса нарочнӑйпа Тӗп суйлав комиссине ярса парать; протоколӑн 2-мӗш экземплярне—Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен союзлӑ республикӑн, автономиллӗ республикӑн, автономиллӗ облаҫӑн, наци округӗн суйлав комиссине ярса парать.

105-мӗш статья. Кандидатсенчен пӗри те кирлӗ чухлӗ сасӑ илмен пулсан, тивӗҫлӗ Округри суйлав комиссийӗ ҫавӑн ҫинчен протоколра уйрӑмӑн паллӑ тӑвать те Тӗп суйлав комиссине тата Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен союзлӑ, автономиллӗ республикӑсенчи, автономиллӗ облаҫсемпе наци округӗсенчи суйлав комиссийӗсене пӗлтерет, ҫавӑнпа пӗр вӑхӑтрах чи нумайрах сасӑ илнӗ икӗ кандидата тепӗр хут баллотировка тӑвасси ҫинчен пӗлтерет. Ҫӗнӗрен баллотировка тумалли куна суйлавӑн пӗррӗмӗш тапхӑрӗ иртнӗ хыҫҫӑн икӗ эрнерен кая хӑвармасӑр палӑртса хурать.

106-мӗш статья. Округра панӑ сасӑсен хисепӗ ҫав округри сасӑлама пултаракан суйлавҫӑсен ҫурринчен сахалтарах пулсан, Союз Советне суйлас тӗлӗшпе е Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округри суйлав комиссийӗ ҫавӑн ҫинчен протоколра уйрӑмӑн паллӑ тӑвать те ҫийӗнчех Тӗп суйлав комиссине тата Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен союзлӑ тата автономиллӗ республикӑсенчи, автономиллӗ облаҫсемпе наци округӗсенчи суйлав комиссисене пӗлтерет. Ҫакӑн пек чухне вара Тӗп суйлав комиссийӗ пӗррӗмӗш суйлавсем хыҫҫӑн икӗ эрнерен кая хӑвармасӑр ҫӗнӗ суйлав ирттермелле тӑвать.

107-мӗш статья. Депутата суйламалли кандидатсене тепӗр хут баллотировка тӑвассине, ҫавӑн пекех тата тӗрӗс мар тесе йышӑннисен вырӑнне ҫӗнӗрен суйлассине пӗррӗмӗш суйлавсем валли тунӑ суйлавҫӑсен списокӗсем тӑрӑх тата пӗтӗмӗшпех ҫак «СССР Верховный Советне суйламалли Положени» тӑрӑх туса ирттереҫҫӗ.

108-мӗш статья. Депутат СССР Верховный Совечӗн составӗнчен тухса ӳксен, СССР Верховный Совечӗн Президиумӗ депутат СССР Верховный Совечӗн составӗнчен тухнӑ хыҫҫӑн икӗ уйӑхран кая хӑвармасӑр тивӗҫлӗ суйлав округӗнче ҫӗнӗ депутат суйламалла тӑвать.

109-мӗш статья. СССР Верховный Советне суйлас тата суйланас правӑна пурнӑҫа кӗртсе пыма СССР гражданисене пусмӑрласа, улталаса, юнаса е подкуп туса чаракан кирек епле ҫынна та икӗ ҫул таран тӗрмене хупса лартаҫҫӗ.

110-мӗш статья. Совет ӗҫлӗ ҫыннисене е суйлав комиссин членӗсене, вӗсем суйлавра суя документсем тусан е пӗлетӗркачах сасӑсене тӗрӗс мар шутласан, виҫӗ ҫул таран тӗрмене хупса лартаҫҫӗ.

Совет профсоюзӗсен делегацийӗ Парижран таврӑнни

Октябрӗн 11-мӗшӗнче Совет профсоюзӗсен делегацийӗ Парижран Мускава таврӑннӑ. Делегацие ВЦСПС Председателӗ В. В. Кузнецов юлташ ертсе пынӑ. Совет делегацийӗ Пӗтӗм тӗнчери профсоюзсен конференцийӗнче пулнӑ, ҫав конференци сентябрӗн 25-мӗшӗнче октябрӗн 8-мӗшӗ хушшинче пулса иртнӗ.

(ТАСС).

Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Производствӑллӑ профсоюзӗсен конгресӗн делегацийӗ Мускава килни

Октябрӗн 11-мӗшӗнче Мускава Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Производствӑллӑ профсоюзӗсен делегацийӗ килнӗ. Делегацире 11 ҫын. Вӗсем пурте Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен промышленноҫӗн тӗп пайӗсенчи профсоюзсене ертсе пыраҫҫӗ. Делегацие Производствӑллӑ профсоюзсен конгресӗн секретарь-казначейӗ Д. Кэри господин ертсе пырать.

Центральнӑй аэропортра Америка профсоюзӗсен делегацине ВЦСПС Президиумӗн тата унӑн Пӗтӗм тӗнчери профсоюзсемпе ҫыхӑнса тӑрас тӗлӗшпе ӗҫлекен отделӗн представителӗсем, профсоюзсен Центральнӑй Комитечӗсен председателӗсем, совет пичечӗн корреспонденчӗсем хирӗҫ тухса кӗтсе илнӗ.

Америка профсоюзӗсен делегацийӗ Мускава ВЦСПС чӗннипе килнӗ. 1945 ҫулхи июль—август уйӑхӗсенче Совет профсоюзӗсен делегацийӗ Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсенче пулнӑччӗ. Халӗ ӗнтӗ Совет Союзне Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсенчи профсоюзсен делегацийӗ килчӗ. (ТАСС).

* * *

Грецири лару-тӑру

БЕЛГРАД, октябрӗн 10-мӗшӗ. (ТАСС). Белградри радио Албанин телеграф агентстви пӗлтернине каласа парать. Ҫав агентство ҫапла пӗлтернӗ: демократиллӗ фронт комитечӗн хаҫачӗ Грецири лару-тӑру ҫинчен статья пичетлесе кӑларнӑ. Ҫав статья авторӗ Греци халӑхӗ пысӑк йывӑрлӑхсем тӳссе ирттерни ҫинчен ҫырать. Грецире 8 миллион ҫынтан 300.000 жандарм тата оккупантсемпе пӗрле ӗҫленӗ 70.000 ҫын ҫеҫ Вулгарис правительствишӗн тӑрать. Апат-ҫимӗҫ ҫитменнипе тата монархистла-фашистла бандӑсем террор тунипе, халӑх пите асапланать. 200.000 ытла грек тусем хушшине тарса кайнӑ.

Грецири террористсем хресченсене ҫаратаҫҫӗ тата ирӗксӗр ӗҫлеттерме хӑваласа каяҫҫӗ.

Греци халӑхӗ валли ют ҫӗршывсенчен килсе тӑракан пулӑшӑва халӑха йӗркешӗн тӑракан ҫынсене валеҫсе параҫҫӗ е чухӑн ҫынсене, монархист-фашистла организацисем майлӑ ҫавӑрас тесе, салатса параҫҫӗ.

ЯПОНИН ЫЛТТӐН, КӖМӖЛ ТАТА ПЛАТИНА ЗАПАСӖСЕНЕ КОНФИСКАЦИЛЕНИ

ЛОНДОН, октябрӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви Токио хулинчен илнӗ хыпарсем тӑрӑх, Макартур генералӑн штабӗ ҫапла пӗлтернӗ: союзниксен влаҫӗсем Японин ылттӑн, кӗмӗл тата платина запасӗсене 250 миллион долларлӑх ытла конфискацилене.

ФИНЛЯНДИН ЭШ ГЕНЕРАЛНЕ ТЫТСА ХУПНӐ

ХЕЛЬСИНКИ, октябрӗн 10-мӗшӗ. (ТАСС). «Илта Саномат» хаҫат ҫапла пӗлтерет: вӑрҫӑ преступникӗсен ӗҫӗсене йӗркелекен органсем октябрӗн 6-мӗшӗнче Эш генерал-лейтенанта тытса хупнӑ. Хаҫат илнӗ хыпарсем тӑрӑх, ӑна верховнӑй ҫар сучӗ суд тумалла.

ГЕССА ФРАНКФУРТ ХУЛИНЕ ИЛСЕ ПЫНӐ

ЛОНДОН, октябрӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви ҫапла пӗлтерет: октябрӗн 8-мӗшӗнче ирхине Гесса Англирен самолет ҫине лартса Франкфурт хулине илсе кайнӑ. Гесс вӑл—нимӗҫсен чи паллӑ вӑрҫӑ преступникӗсенчен пӗри, ҫавӑнпа унӑн суд умне тӑмалла.

БОЛГАРИПЕ ЧЕХОСЛОВАКИ ДИПЛОМАТИЛЛӖ СЫХӐНСА ТӐМА ПУҪЛАНӐ

СОФИЯ, октябрӗн 11-мӗшӗ. (ТАСС). Кунта официальнӑй йӗркепе ҫапла пӗлтернӗ: Чехословаки республикипе Болгари правительствисем пӗр-пӗрин патне хӑйсен полномочнӑй представителӗсене яма килӗшнӗ. Ҫапла ӗнтӗ, ҫав ҫӗршывсем хушшинчи дипломатиллӗ ҫыхӑнусем, Германи ҫарӗсем 1939 ҫулта Чехословаки ҫӗрӗ ҫине кӗрсе кайнӑ пирки татӑлнӑскерсем, халь ҫӗнӗрен пуҫланса каяҫҫӗ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Тарасасем юсакан завода Шупашкарти, Канашри, Улатӑрти, Етӗрнери, Сӗмӗрлери тата Чкаловскри тарасасем юсакан мастерскойсенче ялан ӗҫлеме ҫакӑн пек работниксем кирлӗ: слесарьсем, тараса мастерӗсем, жестянщиксем, лудильщиксем тата хуралҫӑсем. Ҫав ӗҫсене вӗренекен учениксене те илеҫҫӗ. Ҫак адреспа ыйтса пӗлмелле: гор. Чебоксары, улица Ворошилова, 46.

5—2.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: гор. Чӑбэксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн—0-67, заместителӗн — 2-89, секретариатӑн—4-26, пропаганда пайӗн—2-89, парти пурнӑҫ пайӗн—3-99, промышленность пайӗн—3-97, ялхуҫалӑх пайӗн—3-99, рабселькорсен пайӗн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ ,00423

Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. 6. 59 42. 1 п. л. Тираж 16.000 экз